Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

55 (8016) № ✻ Шӑмат кун, 2012 ҫулхи утӑ (июль) уйӑхӗн 21-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

## Йӑлтах ҫынран хӑйӗнчен килет ҫав

Информаци кунӗ

**Иртнӗ юн кун республикӑра пӗрлехи информаци кунӗ иртнӗ май пирӗн районa Чӑваш Республикин юстици минсистрӗ Н.В. Прокопьева ертсе пыракан информаци ушкӑнӗ килчӗ. Чи малтан вӗсем район администрацийӗн пуҫлӑхӗпе Р.Н. Тимофеевпа тӗл пулчӗҫ. Ростислав Николаевич вӗсене район ӗҫӗхӗлӗпе паллаштарчӗ, чи пирвай татса памалли ыйтусем ҫинче чарӑнчӗ. Унтан информаци ушкӑнне кӗрекенсем район администрацийӗн яваплӑ ӗҫченӗсемпе пӗрле предприятисемпе организацисенче, учрежденисенче пулса, унти ӗҫченсемпе паллашрӗҫ, коллективсемпе тӗл пулчӗҫ.**

Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р.Н. Тимофеев Чӑваш Республикин юстици министрӗпе Н.В. Прокопьевӑпа чи малтан район администрацийӗн ЗАГС пайӗнче пулчӗ. Министр кунти юсав ӗҫӗсемпе интересленчӗ.

(Вӗҫӗ 2-мӗш стр.)

**Л. ПАВЛОВА**
**сӑн ӳкерчӗкӗ.**



Республикӑра

## Правительство айккинче юлмӗ

Июлӗн 17-мӗшӗнче 14 сехет иртсен республика территорийӗнче ҫил-тӑвӑл алхаснӑ. Палӑртнӑ тӑрӑх республикӑри Ҫӗрпӳ, Канаш, Сӗнтӗрвӑрри, Ҫӗмӗрле, Улатӑр, Йӗпреҫ, Шупашкар тата Елчӗк районӗсем шар курнӑ. Ҫынсем вилнӗ е аманнӑ тӗслӗхсем пулман пулин те, Сӗнтӗрвӑрри районӗнче инкек шайӗ пысӑкрах. Ҫил-тӑвӑла тата пӑр ҫунине пула 302 ҫурт сиенленнӗ, 48 ял электроэнергисӗр тӑрса юлнӑ. Сӗнтӗрвӑрри тата Ҫӗрпӳ районӗсенче 1600 тата 400 гектар тӗш тырӑ культурисем пӗтнӗ.

Ҫавна май Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев июлӗн 18-мӗшӗнче ҫил-тӑвӑл кӳнӗ инкексем тӗлӗшпе канашлу ирттернӗ. Шар курнисем патшалӑх енчен пулӑшусӑр юлас маррине палӑртнӑ.

Михаил Игнатьев кирлӗ пулсан ҫынсене медицина пулӑшӑвӗ кӑна мар, психологи пулӑшӑвӗ те пама сӗннӗ. «Чӑваш Енре йывӑр вӑхӑтра пӗр-пӗрне пулӑшасси йӑлана кӗнӗ. Ниме – пирӗн аваллӑх тата пысӑк усаллӑ йӑлайӗрке», – палӑртнӑ республика Пуҫлӑхӗ.

Ҫак вӑхӑта сут ҫанталӑк инкекне пӗтерес ӗҫсем пыраҫҫӗ.

**ЧР Пуҫлӑхӗн Администрацийӗн пресс-службы.**

## Ҫӗнтерӳҫӗ – Чӑваш Ен команди

Июлӗн 17-мӗшӗнче Шупашкарта иртнӗ Пӗтӗм Раҫҫейри тӑххӑрмӗш ялти спорт вӑййисем вӗҫленчӗҫ. Ҫӗнтерӳҫӗ – Чӑваш Ен команди.

Пирӗн республика спортсменӗсем пӗтӗмӗшле командӑсем хушшинче те, хӑйсен ушкӑнӗнче те (ялсенче 600 пин ҫын таран пурӑнаканнисен) чи маттуррисем пулнӑ. Команда пурӗ 26 медаль ҫӗнсе илме пултарнӑ.

Пӗтӗм Раҫҫейри ялти спорт вӑййисенче иккӗмӗш вырӑна Омск облаҫӗ, виҫҫӗмӗшне – Челябинск облаҫӗ тухнӑ.

Ҫитес вӑйӑсем тепӗр икӗ ҫултан иртмелле.

Районта

## Канашлу – пӗлтерӗшлӗ ыйтусем тавра

**Кӗҫнерни кун ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем канашлӑва пухӑнчӗҫ. Кун йӗркинче районти кашни ял тӑрӑхӗнчех ҫивӗч тӑракан ыйтусем пулчӗҫ.**

Иртнӗ ҫур ҫулта ял тӑрӑхӗсем бюджета мӗнле пурнӑҫланипе финанс пайӗн пуҫлӑхӗ Р. Ананьева паллаштарчӗ. Ял тӑрӑхӗсенче ку тӗлӗшпе лару-тӑру тӗрлӗрен. Бюджета тултарассине кӑна мар, унпа пӑхса хунӑ расхут пайне те пурте пӑхӑнса пыманни куҫ умне тухрӗ. Сӑмахран, хӑшпӗр ял тӑрӑхӗсенче коммуналлӑ услугӑсемшӗн тӳлемелли пайӑн суммине ытлашшипех тӑкакланӑ. «Умра вара – кӗркуннехи тата хӗллехи тӗттӗм каҫсем. Ял урамӗсенче сутӑ ҫунманнине ҫынсене мӗнле ӑнлантарма шутлатӑр?» – ыйтуллӑн асӑрхаттарчӗ ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсене район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р. Тимофеев. Ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсен хӑйсен бюджечӗ мӗнле «ӗҫленине» тахҫан та пӗрре мар, кашни кун йӗрлесе пымаллине аса илтерчӗ. Нумай ял тӑрӑхӗнче усӑ курман ҫӗрсем пулӑт. Вӗсем вара ӗҫе пӗлсе йӗркелесен бюджета пуянлатма пулӑшаҫҫех.

(Вӗҫӗ 2-мӗш стр.)

## Промышленноҫ производстви ӳснӗ

**Июлӗн 16-мӗшӗнче Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев Министрсен Кабинечӗн членӗсемпе, федераллӑ ведомствӑсен территори органӗсен тата муниципалитетсен ертӳҫисемпе планерка ирттернӗ.**

Республика промышленноҫ комплексӗн ӗҫӗ-хӗлӗ пирки ЧР экономика аталанӑвӗн, промышленноҫ тата суту-илӳ министрӗн тивӗҫӗсене туса пыраканӗ Людмила Федорова паллаштарнӑ. Палӑртнӑ тӑрӑх промышленноҫ продукцийӗ туса хатӗрлесси кӑҫалхи январь–июнь уйӑхӗсенче пӗлтӗрхи ҫав вӑхӑтринчен палӑрмаллах ӳснӗ. Пирӗн районта та ӳсӗм ҫук мар. Продукци туса кӑларасси уннченхи ҫав вӑхӑтрипе танлаштарсан 139,1 процентпа танлашнӑ (пӗтӗмпе 997,1 миллион тенкӗлӗх). «Сеспель» предприяти шайӗ 778,6 миллион тенкӗ (159,4 процент).

Планеркӑра палӑртнӑ тӑрӑх призыв кампанийӗнче ҫамрӑксене ҫара илмелли задание пурнӑҫланӑ. Службӑна 2412 яша ӑсатнӑ. Район та ку енӗпе плана 100 процентӗнех пурнӑҫланӑ, служба ретне 140 ҫамрӑка ӑсатнӑ.

Планеркӑра палӑртнӑ тӑрӑх шывра кӑҫал 31 ҫын вилнӗ. Кун пек тӗслӗх районта 5 пулнӑ. Вӗсенчен пӗри – 2005 ҫулта ҫуралнӑ ача. Ҫынсем ӳсӗрле шыва кӗнипе вилнӗ тӗслӗхсем те пур. Ятарлӑ программӑсен пайӗнчен пӗлтернӗ тӑрӑх шыва кӗме ятарлӑ вырӑнсем 12 хатӗрленӗ, вӗсене пурне те тӗпчесе тухнӑ.

**Хамӑр инф.**

Инкеке лекнисене пулӑшма

## Кашнин пулӑшӑвӗ пӗлтерӗшлӗ

Ҫӗр-шыври кашни ҫынах Краснодар крайӗнче шыв илнипе пулса тӑнӑ лару-тӑрӑва сӑнаса тӑрать, май килнипе пулӑшма тӑрӑшать. «Раҫҫей Перекет банкӗ» уҫӑ акционер обществин 8613 № Чӑваш уйрӑмӗн филиалӗсемпе Муркашри 8613/039 № хушма офисӗн сотрудникӗсем инкекре шар курнисене хӑйсен ирӗкӗпе пулӑшма хӑйсен пӗр кунхи ӗҫ укҫине куҫарса пачӗҫ (пӗтӗмпе 16 пин тенкӗ ытла).

Перекет банкӗ хӑй енчен инкек тӳснисене пулӑшас кӑмӑллисене майсемпе условисем туса пама тӑрӑшать. Укҫа-тенкӗ куҫарса парас тесен банкоматсемпе тата тӳлев терминалӗсемпе усӑ курма май пур. Укҫана алӑран памалла мар. Тӳлев документӗнче укҫа куҫаракан ҫыннӑн хушамачӗ, ячӗ, ашшӗ ячӗ, ӑҫта пурӑннин адресӗ тата мӗн чухлӗ укҫа куҫарнин сумми ҫырӑнса юласҫӗ.

Банкоматсемпе тата тӳлев терминалӗсемпе усӑ курса укҫа куҫарнӑ чухне менюн ҫак пункчӗсемпе усӑ курас пулать:

– Налоги, бюджетные и прочие платежи;

– Благотворительность – Российский Красный Крест – помошь пострадавшим от наводнения в Краснодарском крае 2012 г.

**Ю. ИВАНОВ,**
**Перекет банкӗн хушма офисӗн заведующийӗ.**

Йӗрке тума пулать-и?

## Муркашӗпе тӗтӗм явӑнать

Крымра та, Кавказра та пӗрре кӑна мар каннӑ пулин те Муркашри пек кашни кӗтесре шашлык пӗҫернине курман. Унта ҫак ҫимӗҫе кафесенче кӑна сӗнеҫҫӗ. Кунта вара?..

Апат-ҫимӗҫе сутнӑ чухне санитари требованийӗсене, уйрӑмах ҫуллахи вӑхӑтра, ҫирӗп пӑхӑнмалли никамшӑн та вӑрттӑнлӑх мар. Унсӑрӑн инкек пуласса кӗтсех тӑр.

Пӗрремӗшӗ, сӑмаха шашлык пӗҫерекенпе сутакан пуҫлар. Хайхисен санитари кӗнеки пур-и? Халӑхран укҫа илеҫҫӗ пулсан мӗншӗн касса аппарачӗпе усӑ курмаҫҫӗ?

Иккӗмӗшӗ, какай пахалӑхӗ пирки кам ҫирӗплетсе калама пултарать. Тен ӑна чирлӗ выльӑхран хатӗрленӗ?

Виҫҫӗмӗшӗ. Урам варринче апат-ҫимӗҫ пӗҫерме (е ӑшалама темелле-и) юрать-и? Ҫитменнине тата кам ӑҫта пӗлет – ҫавӑнта тӑрать те тӗтӗм кӑларма пуҫлать. Ӗҫ пӳлӗмӗсене те тӗтӗм явӑнса кӗрет. Муркашра пушар тухман-ши тетӗн вара.

Муркаш ял тӑрӑхӗн кунта йӗрке тумаллах. Тен ятарлӑ лаптӑк уйӑрмалла хайхи тӗтӗм йӑсӑрлантаракансем валли. Паллах, учреждениcемпе юнашар мар.

**А. ИВАНОВ.**

Саламлатпӑр



Хаклӑран та хаклӑ хӗрӗме, юратнӑ мӑшӑра, ырӑ кӑмӑллӑ аннене, хисеплӗ тӑвана – Москакасси ялӗнче пурӑнакан **Людмила Алексеевна ПУШКИНАНА** юбилей ячӗпе чун-чӗререн тухакан чи ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, телейлӗ те вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр. Ачусемпе, мӗн пур тӑванпа пӗрле савӑнса пурӑнмалла пултӑр. Эпир сана юрататпӑр, хисеплетпӗр, санпа мухтанатпӑр, эсӗ пурришӗн савӑнатпӑр.

**Салампа: ашшӗпе амӑшӗ, хӗрӗсемпе кӗрӳвӗсем, тӑванӗсем, кӳршисем, тус-юлташӗсем.**



Хаклӑ ҫыннӑмӑра, юратнӑ мӑшӑра, аттене – Юнкӑ ялӗнче пурӑнакан **Сергей Анатольевич ШИШКИНА** 45 ҫулхи юбилей ячӗпе чун-чӗререн саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр. Турри сана вӑй-хал патӑр, чир-чӗртен упраса тӑтӑр. Пурӑн эсӗ пурнӑҫ телейне туйса, ачу-пӑчуна савса, кун-ҫул сукмакӗпе утса, хӑвӑн ӑшшупа пире савӑнтарса. Эсӗ пурри пирӗншӗн пысӑк телей, савӑнӑҫ. Эпир сана юрататпӑр, хисеплетпӗр, эсӗ пурришӗн тӑрӑх савӑнатпӑр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, ывӑлӗ, хӗрӗпе кӗрӳшӗ, хунямӑшӗпе хуньстарикӗ, хӑтипе тӑхлачи, Симаковсем, Ермаковсем, Кудиковсемпе Мазиковсем.**

Хамӑр юратнӑ аннене, мӑшӑра, асаннене – Мӑн Шаптак ялӗнче пурӑнакан **Анна Александровна СОКОЛОВӐНА** ҫуралнӑ кунӗ ячӗпе чун-чӗререн саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, телейлӗ вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр. Ачусемпе, тӑванӗсемпе пӗрле савӑнса пурӑнмалла пултӑр. Эпир сана юрататпӑр, хисеплетпӗр, эсӗ пурришӗн Турра тав тӑватпӑр.

**Салампа: мӑшӑрӗ, хӗрӗ, ывӑлӗсемпе кинӗсем, мӑнукӗсем тата кӗҫӗн мӑнукӗсем.**



Хорнуй ялӗнче пурӑнакан, чылай ҫул Муркашри ҫыхӑну уйрӑмӗнче вӑй хунӑ хаклӑ та юратнӑ аннене, асаннене, аппана, ҫывӑх тӑванӑмӑра – **Юлия Алексеевна СТЕПАНОВӐНА** 60 ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗререн тухакан ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр. Юман пек ҫирӗп сывлӑх, вӑрӑм кун-ҫул, канлӗ ватлӑх сунатпӑр, малашне та сана пурнӑҫра Турри вӑйхӑват парсах тӑтӑр. Мӗн ӗмӗтленни-шутлани пурнӑҫа кӗрсе пытӑр ялан, хуйхӑ-суйхӑ ан пытӑр ҫума нихӑҫан. Анлӑ кӗрекӳ тӑван килйыша хапӑл тутӑр куллен. Пире, ачусене, кун-ҫул йывӑрлӑхне пӑхмасӑр пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑларнӑшӑн тата халӗ те пирӗншӗн чӑн-чӑн тӗрек пулнишӗн тав тӑватпӑр.

**Саламлаканӗсем: хӗрӗсем, ывӑлӗсем, кинӗсем, мӑнукӗсем, ҫывӑх тӑванӗсем, Турайри Николаевсен ҫемйи.**

Информаци кунĕ

# Йăлтах çынран хăйĕнчен килет çав

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Çакна каласа хăвармалла: кунта юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ. Тĕрĕсрех каласан, вĕсем вĕçленмен-ха. ЗАГСа пĕрремĕш хутран хăпарнă çĕрте стенасене сăрланă, 3-мĕш хутра алăка çĕннипе улăштарнă. Кĕçех кунта перилăсене те çĕннисемпе улăштараççĕ. Вара çамрăк мăшăрсене хăйсене телей пиллекен зала хăпарма тата та кăмăллăрах пулĕ. Ырă йăласен залĕнче вара Надежда Викторовнăна питĕ килĕшрĕ. «Кунта питĕ хитре, çамрăк мăшăрсем хăйсем кăмăллă-и вара хăйсен çемйисене çакăн пек хитре çĕрте регистрациленĕшĕн?» – тесе ыйтрĕ.

– Паллах, кăмăллă, урăхла мĕнле пулма пултартăр.

Надежда Викторовна юсав ĕçĕсем пирки хăш-пĕр сĕнÿсем пачĕ.

Ун хыççăн Ростислав Николаевичпа Надежда Викторовна миравай судьясен пулас суд участокĕнче пулчĕç. Район хаçат редакцийĕн çурчĕн пĕрремĕш хутĕнче, малтан типографи пулнă вырăнта, тĕплĕ юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Ĕçсем вĕçленсен кунта питĕ хăтлă пуласси пирки пĕр иккĕленÿ те çук. Хальлĕхе вара министр строительсене ăçта мĕскер тумалли пирки хăйĕн шухăшне каларĕ.

Унтан информаци ушкăнĕ «Сеспель» акционерсен хупă обществинче пулчĕ. Предприяти туса кăларакан продукцие тăвасси мĕнрен пуçласа мĕнпе вĕçленнипе тĕплĕн паллашрĕç. Предприятин производство цехĕн пуçлăхĕ О.Л. Суматохин каланă тăрăх предприятинче пурĕ 12 конструктор ĕçлет. Вĕсем шăпах ĕнтĕ «Сеспелĕн» «пуç мими» вырăннех шутланаççĕ. Вĕсен тăрăшулăхне пулах ĕнтĕ предприятинче туса кăларакан пĕр прицеп е полуприцеп та теприн пек мар. Кашнин хăйĕн конструкцийĕ, кашни хăйне майлă интереслĕ те уйрăм. Пĕтĕм Раççейĕпех саланать «Сеспельсен» продукцийĕ. Вĕсене туянакансем тупăнсах тăнин сăлтавне вара кунта ĕçлекенсем акă мĕнре кураççĕ: кунта пĕтĕмпех çĕнĕ технологипе ĕçлеççĕ, тавар пахалăхне продукцие тума пуçланинчен мĕн туса пĕтеричченех контроллесе тăраççĕ.

Пĕр прицепа тума 7 кун кирлĕ-мĕн. Кунта 2 сменăпа ĕçлеççĕ. Пĕрремĕш смена ирхи 7 сехетрен пуçласа 15 сехет çурăччен пырать, тепĕр смена вара – 15 сехет те 20 минутран пуçласа 23 сехет те 50 минутчен.

Пурĕ 400 çын патнелле ĕçлет пулсан предприятинче, вĕсенчен 320-шĕ – рабочисем.

– Механик кирлĕ пулчĕ халь пире. Тупма йывăр пулать пуль тесе шутланăччĕ. Килсе тулчĕç тем чухлĕн. Суйласа илмелле пулчĕ, – каласа парать Олег Леонидович.

Техслужащисем кунта 15 пин тенкĕ илеççĕ пулсан, тĕлĕнме кирлех те мар пуль ытти рабочисем мĕн чухлĕ илнинчен.

– Мускава çÿренисем те чылайăн килчĕç ĕçлеме. Ĕç укçи унтинчен кая мар. Çитменнине килте, çемьепе пурăнаççĕ, – тет вăл.

Малтан юсав ĕçĕнчен пуçланă, унтан çăнăх, песук тата ытти япаласем турттармалли прицепсем тăвакан предприятин паянхи газ, бензин, битум турттаракан прицепĕсемпе полуприцепĕсене, контейнер-танкĕсене те хапăлласах туянаççĕ.

Малтан уйăхне 40-шер штук кăларнă пулсан, паян – 70-шер. Малашне уйăхне 150-шар таран кăларма тĕллев лартаççĕ.

– Çакăн пек продукци туса кăларакан заводăн мĕншĕн романтикăлла ят?- ыйтмасăр чăтаймарĕ министр.

– Çеçпĕл – юр кайсан пĕрремĕш тухакан чечек, – пулчĕ хурав.

Предприяти ятне тĕрĕс суйласа илнине вара кунти ĕç кăтартăвĕ те çирĕплетсе парать. Раççейре туса кăларакан çĕнĕ йышши продукцисен 30–40 процентне шăпах «Сеспельте» туса кăлараççĕ. Полуприцепсем туса кăларассипе вара çĕршывра Москакассинче вырнаçнă çак пысăкăш мар заводпа танлашаканни ниçта та çук.

Москакасси ял тăрăхĕн администрацийĕшĕн вара предприяти кунта вырнаçни пĕлĕтрен татăлса аннă «укçа хутаççи» вырăннех. Вырăнти бюджета килекен укçа-тенкĕн ытларах пайĕ – «Сеспелĕн» тÿпи.

Çакăн чухлĕ ĕçлекенĕн тупăшран илекен налукĕ самаях пуçтарăнать вĕт вырăнти бюджета. Халĕ кунта çĕнĕ цех тăваççĕ. Вăл хута кайсан çынсен йышĕ те ÿсĕ, Москакассисен бюджет «хутаççи» те хулăнланĕ.

– Çуркунне килсе курăр тата çак цех хута кайнă хыççăн. Ун чухне кунта пĕтĕмпех урăхла пулĕ,– терĕç «Сеспельте».

– Илтме илтнĕччĕ ку предприяти çинчен. Анчах та çакăн пек вăйлă та пысăк предприятиех тесе шутламанччĕ,– тĕлĕннине пытараймарĕ министр.

Предприятие ертсе пыракансем кунта малашне сăрламалли ĕçсене роботсем тăваса шантараççĕ. Продукципе Европа шайне тухма тĕллев лартаççĕ. Чăнах та, çынран хăйĕнчен нумай килет çав малашнехи пурнăç мĕнле пуласси. Ним çук çĕрте çакăн пек предприяти туса лартса çакăн пек тĕнчипех кирлĕ пахалăхлă продукци туса кăларни çаках çирĕплетсе парать.

**Л. ПАВЛОВА.**

Районта

# Канашлу – пĕлтерĕшлĕ ыйтусем тавра

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ В. Ананьев шăпах районти комисси пур ял тăрăхĕнче те çакăн пек çĕр лаптăкĕсем пуррипе çуккине тĕрĕслени çинче чарăнса тăчĕ. Çĕрсемпе усă кураççĕ, анчах та усă курнăшăн укçа тÿлени çук. Ярапайкасси, Ярославка, Юнкă тата Ильинка ял тăрăхĕсенче ку ыйтупа уйрăмах тимлемеллине палăртрĕç канашлура. Августăн 10-мĕшĕччен ял тăрăхĕн пуçлăхĕсене вырăнсенчи тĕрлĕ çĕр лаптăкĕсен хуçисем пирки сведенисем тăратмаллине каларĕç.

Ял тăрăхĕсенче тирпейилем кĕртес, урамсене электрификацилессипе çыхăннă ыйтусем те кун йĕркинчен тухман ыйтусен шутĕнчех. Вĕсем пирки канашлура питĕ хĕрÿ калаçу пулчĕ. Ялсенчен каяш турттарса тухассипе ĕçлесе çитереймен самантсем сахал мар. Урамсене электрификацилессинче вара пĕтĕмĕшле кăна мар, кашни тĕслĕхе уйрăммăн сÿтсе явса малалла ĕçлемеллине палăртрĕç.

Республика Пуçлăхĕ нумай пулмасть кăларнă указ тавра та калаçу пулчĕ. Сăмах июнь–август уйăхĕсенче хатĕрлесе панă кашни килограмм сĕтшĕн уйрăм çынсене 1 тенкĕ те 50 пус хушма тÿлев парасси пирки пырать. Ĕç-пуçа иртнĕ çулта выльăх пуçне сыхласа хăварас тĕллевпе мĕнле йĕркеленĕ, çапла пурнăçлама каласса таталчĕç. Хушма тÿлев илме икĕ тапхăр палăртнă: июнь–июль уйăхĕсемшĕн – августăн 15 мĕшĕччен, август уйăхĕшĕн сентябрĕн 15-мĕшĕччен сведенисем тăратмалла.

Шыва кĕрес тапхăр вĕçленменрен шыв çинчи хăрушсăрлăх ыйтăвĕ те кун йĕркинче пулчĕ. Сăмах май кăçал 5 çын шывра путса вилнĕ. Сăлтавĕсем тĕрлĕрен, анчах та шыва кĕме юраман вырăнсенче шыва кĕни, ашшĕ-амăшĕ ачисене тимлĕхсĕр хăварни тата ерех ĕçнĕ хыççăн шыва кĕни – тĕп сăлтавсем.

Кунсăр пуçне канашлура ял тăрăхĕсенче участокри полици уполномоченнăйĕсене ĕçлеме пÿлĕмсем уйăрасси пирки те, чрезвычайлă лару-тăру пулас умĕн халăха йĕркеллĕ пĕлтересси пирки те, муниципаллă услугăсем парассинче ведомствăсем хушшинчи çыхăну пирки те чарăнса тăчĕç.

Малашне татса памалли ыйту чылай пулни куç кĕрет. Вĕсене пахалăхлă татса парасси вара – ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсенчен.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Мăн Сĕнтĕрсен хăйсен пăшăрханăвĕ

Июлĕн 12-мĕшĕнче районта пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Калаçу республикăри çул-йĕрсем çинчи аварилĕ лару-тăру пирки, ял хуçалăх производствине, вăл шутра килти хушма хуçалăха тытса пыракансене, республикăра сĕт туса илсе хатĕрлесе парассипе ĕçлекенсене патшалăх пулăшăвĕ парасси çинчен тата ытти ыйту пирки пулчĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л. Тарасова, Чăваш Республикинчи профсоюзсен пĕрлешĕвĕн ертÿçин çумĕ В. Ильин Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче пулчĕç, кунти ĕçхĕлпе паллашрĕç, çынсене пăшăрхантараканни тавра калаçрĕç. Эпир пулнă чух "Сундырь-Хлеб" чикĕллĕ яваплăхлă обществăра вăй хуракансен хĕрÿ ĕç тапхăрĕччĕ. Апла пулин те вĕсене хумхантараканни чылай пулни пĕр самантлăха пĕрле пухăнма чармарĕ.



**Сăн ÿкерчĕкре: пĕрле пухăнсан калаçмалли сахал мар.**

**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**

Чи малтанах республика представителĕ пурне те шухăшлаттарма тивĕç çивĕч ыйтăва хускатрĕ. Синкер статистика кăтартăвĕ тăрăх иртнĕ çул Чăваш Республикин çул-йĕрĕ çинче 1799 авари пулнă, унта 261 çын вилнĕ тата 2352-шĕ аманнă. Ачасем суранланасси, вилесси те çулсерен ÿссе пырать.

– Çак хăрушлăха Федерацин Чăваш Республикинчи тĕп инспектор çулсем начаррипе, вĕсен таврашĕнчи инфратытăм аталанăвĕ вăйсăррипе, водительсене хатĕрлесси тата халăхра çутлăх ĕç-хĕлне йĕркелессин шайĕ пĕчĕк пулнипе ăнлантарать, – палăртрĕ хăйĕн шухăшне республика представителĕ Виталий Петрович.

Калаçăва çул-йĕр çинчен пуçартăмăр та ытти çĕрти пекех Мăн Сĕнтĕрсене те хĕрÿлентерчĕ çивĕч ыйту. Акă, тĕслĕхрен, Çĕнĕ урамра пурăнакансене автомашинăсем ытла пысăк хăвăртлăхпа çÿрени пăшăрхантарать. Кунта утакансемшĕн, уйрăмах ватăвĕтĕшĕн, йĕркене пăхăнманлăх хăрушлăх пулса тăрать.

– Инкек-синкек пуличчен маларах сыхланни вырăнлăрах, çитес вăхăтра çак ыйтăва татса пама ыйтатпăр, – терĕç çакăнта пурăнакансем, çÿрекенсем пĕр шухăшлăн. Çавăн пекех тепĕр урамра тротуар çукки те хăйне майлă йывăрлăх. Çакă та çÿлерех асăннă хăрушлăха сиресшĕн çыхăннă.

"Сундырь – Хлеб" чикĕллĕ яваплăхлă общество районти тата ун тулашĕнчи суту-илÿ точкисене çăкăрбулка изделийĕсемпе, пылак çимĕçпе тивĕçтерет. Çакна вара автомашина куллен тĕрлĕ еннелле турттарать. Кирек епле автотранспорт хатĕрĕ те такăр çулсем тăрăх кăна утма пултарать. Нумаях пулмасть çÿлерех асăннă общество çĕнĕ икĕ автомашина туяннă. Вĕсенчен пĕри Мăн Хураçкана тĕрлĕ продукци турттарать.

– Асăннă çул юсавсăрри пире те пысăк чăрмав кÿрет. Вĕр çĕнĕ машина куллен япăх çулпа çÿрени ăна вăхăтсăр кивелтет, унта кирек епле транспорт хатĕрĕ те япăхать, – палăртрĕ чун ыратăвне общество ертÿçи Л. Ильгечкин.

Çавăн пекех çул-йĕрпе çыхăннă ытти ыйту хумхантарчĕ пухăннисене. Ку тăрăхри ача сачĕсенче вырăн çителĕксĕрри те хăйне майлă йывăрлăх вĕсемшĕн. Сывлăх сыхлав учрежденийĕн статусĕ улшăнни те хытă пăшăрхантарать.

– Муркашри больницăри медицина ĕçченĕсем пире йышăнасшăн марри пĕрре кăна мар пулнă, – терĕç Мăн Сĕнтĕрте пурăнакансем.

Патшалăх агропромышленноcть комплексне аталантарма тĕрлĕ программа шайĕнче витĕм кÿрет. Акă çутлăх сĕт туса илес тата ăна вырнаçтарас енĕпе ĕçлекен ял хуçалăх таварĕсем туса кăларакансене, çав шутра хушма хуçалăх тытакан граждансене тата агропромышленность комплексĕн организацийĕсене, вĕсен йĕркелÿ-право формине пăхмасăр патшалăх пулăшăвĕ пурнăçланасси çинче район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л. Тарасова чарăнчĕ.

Ĕçлĕ çул çÿрев кантăк туса хатĕрлекен "Карина" организацинче те иртрĕ. Вĕсем ăсталакан продукцие кăмăллакансем йышлă пулнăран сутма ăсатмалли продукци йышлăччĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

2012 çул – Раççей историйĕн çулталăкĕ

# Çав-çавах паллă пулăм

Сĕтел çинчи календаре уçатăп та унта ноябрĕн 7-мĕшне хальхилле «Килĕшÿпе çураçу кунĕ» тенипе пĕрлех «Раççейри 1917 çулхи Октябрьти революци кунĕ» тесе çырса хуни те пур. «Вĕсемпе Чăваш çĕршывĕ мухтанать» кĕнекери умсăмахра: «Раççейри Октябрьти революци 20-мĕш ĕмĕрти чи паллă пулăм шутланать. Вăл патша пуç пулса тăракан Раççейри вак халăхсене хăйсен çĕр-шывĕсене йĕркелеме ирĕк туса пачĕ»,– тесе çырнă.

Акă пирĕн чăваш халăхĕн те вăл вăхăтра патшалăх пулман вĕт. Кăнтăр енче пурăнакансем, территорипе илсен, ун чухнехи Чĕмпĕр кĕпĕрнине, вăтам тăрăхра пурăнакансем Хусан кĕпĕрнине, Çурçĕр тăрăхĕнчисем Чул хула крайне пăхăнса тăнă, уессемпе вулăссем çине пайланнă.

Октябрьти революци хыççăн тепĕр 3 çултан çеç – 1920 çулта – Чăваш автономи облаçне туса хунă. Кайран 1925 çулта автономиллĕ республика йĕркеленĕ.

21-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Чăваш Республикине Президент ертсе пыма пуçăннăранпа 10 çул çитнине халалласа калană хăйĕн сăмахĕнче ун чухнехи Президент Н.В. Федоров Чăваш Республики Раççейри 89 регион хушшинче экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕ енĕпе малти вырăнсенчен пĕрне йышăнни пирки асăнчĕ. Апла пулсан тĕрĕс çулпах пыратпăр эпир.

Манăн аттепе анне 1911 çулта çуралнă. 100 çул тултарнă кунĕсене паллă турăмăр. Çуралнин хучĕсемпе интересленетĕп. Революциччен çуралнă-çке. Çуралнă вырăнĕсене иккĕшĕнне те районта, ял Советĕнче, Чăваш Республикинче тесе çырнă. Хăçан çуралнисене шута илмелли кĕнекере çак номерсемпе шута илнĕ тесе çырнă. Ыйткаласа пĕлетĕп те, ку кĕнеке чиркÿ çумĕнче йĕркелене упранса пурнă, халĕ вĕсем архивсенче ĕнтĕ.

Апла революциччен вак халăхсен алăра документсем те пулман. Тата чăвашсен, ытти халăхсен те çаплах пулнă пулĕ, хушаматсем те пулман. Ăна эпĕ, 20 çул каялла та пулĕ, пĕрин аса илĕвĕнченех пĕлетĕп. Вăл патша çарĕнче хĕсметре пулнă вăхăтра командирсем килнĕ те вĕсене строя тăратса кашниненех килте ашшĕн миçе теçетке çĕр пурри çинчен ыйтма пуçланă. Камăн ашшĕн 10 теçеткерен иртнĕ, вĕсене стройран кăларса уйрăм тăратнă. Кун чередĕ халех çитмен. Вăл вырăссем калаçнине илтнĕ. Камăн çĕр нумайрах – апла пуянрах, патша çарĕ валли унтер-офицер пулма вĕренме илсе каяççĕ иккен. Унăн офицер пулас килнĕ пирки черет çитсен тÿрех: «20 теçетке!»– тет. Кайран штабра хушаматсене ыйтаççĕ те ку вăл мĕнне те пĕлмест. Тăлмач ăнлантарнă хыççăн ялта вĕсен ăраттине Çĕтĕк тенине каласан вара ăна тÿрех Оборванцев пулатăн теççĕ. Çапла чăваш каччи, хушаматсăр пурăннăскер, патша çарĕнче Çĕтĕк Яккуран Оборванцев Яков пулса тăрать.

Çапла Октябрьти революци хăвачĕпе чăвашсемпе ытти вак халăхсен хушаматлă та пулса тăтăмăр, патшалăхсене те аталантартăмăр.

**Н. ПЕТРОВ, ĕç ветеранĕ.**

Нискасси ялĕ.

# Çирĕп кăмăллă пулмасан

**Саккун тавра**

Юлашки вăхăтра ют харпăрлăхри пурлăха вăрлассин тĕслĕхĕсем нумайланчĕç. Ытларах чухне çакна эрех ĕçекенсенчен кĕтме пулать, анчах та тепĕр чух çак утăма йĕркеллĕ çынсем те тăваççĕ.

Акă пĕлтĕр декабрĕн 16-мĕшĕнче пирĕн районти Çĕньял Апаш ялĕнчи К., хăйĕн килĕнче ӳсĕр С. нимĕн туйми çывăрнă чухне, унăн трико кĕсйинчен 1500 тенкĕ кăларса илет. Суд ларăвĕнче К. хăй çакна шутласах тунине, апла пулсан айăпа та йышăнать. Вăл ыйтнипе суд ларăва уйрăм йĕркепе свидетельсене чĕнмесĕрех, ĕçри çирĕплетӳсене тишкерсе тухмасăр ирттерет.

Айăплава палăртма суд тĕрлĕ енсене шута илет: К. хăйĕн айăпне туллин йышăннине, преступление уçса парассине тата тĕпчессине активлă хутшăннине, унăн çул çитмен икĕ ача пулнине, тăкак тӳснĕ çынна хăй ирĕкĕпе вăрланă суммăна каялла тавăрса панине, пурăннă вырăнта К.-на япăх енчен сăнламаннине те. Ял тăрăхĕн администрацине ун çине çырнă çăхавсем ку таранччен пулман, çемйи ял тăрăхĕнчи учетра тăрать, психиатр тата нарколог патĕнче учетра тăмасть, ку таранччен ăна судпа айăпламан, уголовлă явап тыттарман – çакă та К.-на майлă пулчĕ. Тунă преступленишĕн суд ăна 5000 тенкĕ штраф пама йышăнчĕ.

Анчах та К. саккунпа палăртнă срокра штраф тӳлеймен. Çав сăлтавпа суд приставĕн представленийĕпе суд ăна 60 сехет юсану ĕçĕсене пурнăçлама йышăну кăларать.

Тепĕр тĕслĕх çинче те чарăнса тăрар. А. гражданка – икĕ ача амăшĕ. Унăн яланхи ĕç тата пурăнмалли вырăнĕсем пур, эрех-сăрапа иртĕхмест. Хĕрарăм пирки лайăх калаççĕ. Анчах та кăçалхи февралĕн 25-мĕшĕнче вăл та кĕтмен çĕртен вăрăлла ĕç пурнăçлать. Каçхи вун пĕр сехет тĕлнелле Мулкачкассинчи П. килĕнчи апатлану пӳлĕмĕнчи тумба çинчи теттене хăйĕн килне илсе тухса каять. Кил хуçисене 5000 тенкĕлĕх тăкак кӳрет.

Судра А. хăйĕн айăпне туллин йышăнать. Теттене те суд ларăвĕччченех хуçине каялла тавăрса парать.

Анчах та преступление тунă-çке-ха, суд А. гражданкăна штраф пама йышăну кăларать.

Хĕрарăм штрафа паянхи кун тĕлне те тӳлемен. Апла пулсан ку наказание урăххипе те ылмаштарма саккун ирĕк парать.

Тĕслĕхсем тĕрлĕрен пулаççĕ. Акă теприсен лавккаран хăйсем туянман çимĕçе çиес килет. Çапла, кăçал çуркуннепе Кашмашри пĕр урамра ӳсĕр çын юр çинче çывăрнипе усă курса Б. преступлени тăвать. Çывăракан çыннăн пакетне (унта 1200 тенкĕлĕх туяннă апат-çимĕç продукчĕсем тата 500 тенкĕ пулнă) киле илсе каять. Апат-çимĕçе çисе ярать, укçипе вара шурă эрех тата пирус илет.

Б. та судра хăйĕн айăпне йышăнчĕ, суд ларăвĕчен хăй кӳнĕ тăкака хуçине саплаштарчĕ.

**Т. САЛДЫРКИНА,**
**ЧР Муркашри 1 № суд участокĕн миравай судйи.**

**Обществăлла организацинче**

# Программа витĕмĕпе



Раççейри куç курманнисен районти обществăлла организацийĕн ертӳçи А. Михайлова çак кунсенче Мускав хулине çитсе килчĕ. Ĕçлĕ çул çӳреве "Куç курман инвалидсен социаллă туризмĕ" пилотлă программăпа килĕшӳллĕн йĕркеленĕ. Унăн авторĕ – çӳлерех асăннă организацин тĕп правленийĕ. Ку шайри ĕç иккĕмĕш çул пурнăçланать.

Чăваш Республикинчен унта хутшăнма вунă çын тивĕçнĕ. Паллах, делегаци шутне лекессинче районсенчи организацисен ĕç кăтартăвне хаклани мала тухать. Палăртма кăмăллă, А. Михайлова тата Е. Никитина ĕçлеме пуçланăранпа организаци юлашки çулсенче республика шайĕнче малти вырăнсене йышăнать. Асăннă программа Раççейĕн тĕрлĕ регионĕсене пĕрлештерет, çавна май пĕр-пĕрин ĕçĕ-хĕлĕпе паллашма май парать. Ĕçлĕ çул çӳрев пирки тĕплĕнрех каласа пама эпĕ районти организаци ертӳçинчен А. Михайловăран ыйтрăм.

– Çакăн пек программа ĕçлени куç курман çынсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ун йышши мероприятисем пире ыттисемпе пĕр шайра туйма май параççĕ. Ĕçлĕ çул çӳревре Чăваш Республикин делегацийĕ Пермьри çавăн пек организципе паллашма пултарчĕ. Пĕтĕмĕшле илсен çак ĕç-хĕле экскурси мелĕпе йĕркеленĕ. Эпир Мускав хулинчи паллă чылай вырăнта пулса куртăмăр. Булгаков, 16 ĕмĕрти акăлчан картишĕ тата ытти музейсенче куç курман çын та экспонатсемпе паллашма пултарать. Чылай экспоната вара итлеме, тытса пăхма май пур. Музейсем тактиль мелĕпе анлă усă кураççĕ, çакă уйрăмах пирĕншĕн аван. Çакăн йышши ытти программа малашне те вăя кĕтĕр, – паллаштарчĕ хăй шухăшĕпе Анастасия Димитриевна.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Кӳршĕ республикăра – уявра

**Фоторепортаж**



Мари Эл Республикинче кăçал çулла Ильинкăсем иккĕмĕш хут пулма ĕлкĕрчĕç. Июнь уйăхĕнче Тренккăри Культура çурчĕ çумĕнче йĕркеленнĕ юрăпа ташă ансамблĕ Горномарийски районĕнче иртнĕ регионсем хушшинчи «Пеледыш айо» («Чечексен уявĕ») уява хутшăнчĕ. Июлĕн 14-мĕшĕнче вара регионсем хушшинчи этнографипе фольклор фестивалĕнче Килимарски районĕнчи Арда салинче пулса курчĕ.

Коллективпа пĕрле пирĕн район администрацийĕн вĕрентӳ тата çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ З. Дипломатова та кӳршĕсен уявне хутшăнма кăмăл турĕ. Уяв хуçисене вăл чăваш халăх тумне тăхăннă пукане тата «Чуваши. Этническая история и традиционная культура» кĕнеке парнелерĕ.

Уява çав тери çӳллĕ шайра йĕркеленĕ. Темĕн вăрăмăш сĕтел çинче наци апат-çимĕçĕ, юнашарах – ал ĕçĕсен сутуилӳ куравĕ, ĕлĕкхи ĕç хатĕрĕсем те ... Пĕр сăмахпа каласан, куç умне халăх историне кăларнă.

Уяв хуçисем Тренккăсене хăйсен халăхĕ вырăннех йышăнчĕç. «Хăш районтан эсир?» – тесе ыйтрĕç. Пирĕн, тури чăвашсен тумĕ марисен тумĕнчен ытла уйрăлсах тăмасть çав. Ильинка ял тăрăхĕ Горномарийски районĕпе чикĕре вырнаçнине шута илсен пушшех те.

Чул хула облаçĕнчен, Удмурт Республикинчен, Киров облаçĕнчен тата ытти вырăнсенчен халăх чылай пухăннăччĕ уява. Тренккăри информаципе культура центрĕн ертӳçи Н. Сергеева тата художество пултарулăх ертӳçи Н. Чернова ертсе пынă ансамбль хăйĕн сапăр тумĕпе, хаваслă чăваш юрри-ташшипе уява пухăннисене тыткăнларĕ. Регионсем хушшинчи «Мăн асаттесен çĕрĕ» («Земля предков») пиллĕкмĕш фестивальтен дипломпа таврăнчĕ.

Муркаш районне кӳршĕре кăтартма шаннăшăн Ильинка ял тăрăхĕ, юрăпа ташă ансамблĕ район администрацине тав сăмахĕ калать.

Августăн 2-мĕшĕнче вара Ильинка – Тренккă тăрăхĕнче пысăк уяв ирттерме палăртаççĕ. Çветуй Илья пророк кунне питĕ интереслĕ ирттерме хатĕрленеççĕ. Килсе курăр пирĕн пата!

**Н. СЕРГЕЕВА,**
**Тренккăри информаципе культура центрĕн ертӳçи.**





**Редакци почтинчен**

# Çемье – чи хакли

Тăван çĕр-шыв мĕнрен пуçланать тесе ыйтсан, пĕрисем – çуралнă вырăнтан, теприсем – тăван килтен, виççĕмĕшсем вара – аттепе аннерен, теççĕ. Аттепе аннерен текеннисем хăйсен несĕлĕсене те аван пĕлеççĕ, хисеплеççĕ.

Йывăç та тымарсăр ӳсеймест тенĕ пек, çын та хăйĕн йăхне пĕлсен, йăхри аслă çынсене сума сусан кăна йĕркеллĕ аталанать, вăй илсе тăрать. Хальхи вăхăтра нумайăшĕ хăйсен несĕл йывăçне «чĕртсе тăратассипе» тимлет. Ку чылай çемьешĕн таса та хаклă.

Манăн вара Шуркасси ялĕнчен пуçланнă Партас йăхĕ пирки пĕлтерес килет. Бардасовсем кăçал февральте «Манăн йăх-несĕл» ятпа Шупашкарта çемье уявне хутшăнчĕç. 120 çын пухăнчĕ унта.

Бардасовсем паян хăйсен 11 ăрăвĕ пирки пĕлеççĕ. Çакă – чăн-чăн пуянлăх. Андрей Семенович Бардасов, 1890 çулта çуралнăскер, ăрăва тăсакансем валли пĕр тетрадь парса хăварнă. Çак тетрадĕн паян хакĕ çук. Тетрадьре вăл ялти ватă çынсен тата тăванĕсен аса илĕвĕсене çырса пынă пулнă. Çапла вара Партас йăхĕ çинчен паян кĕнеке те çырса кăларма пулать.

Çак йăхран пĕри Наполеона хирĕç çапăçса Парижа та çитнĕ иккен. Халăхра ăна Иван салтак тенĕ. Вăл ун чухне çак вырăнти пĕрремĕш салтак пулнă, хĕсметре 25 çул тăнă. Йăхра Польшăра çапăçнă арçынсем те пулнă, Деникинпа пĕрле çапăçусене хутшăннисем те, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи те, паллах, Партассемсĕр иртмен.

Çак хушамата пуçарса яраканĕсем Семен Кузьмичпа (Партас) (1870–1959 ç.ç.) унăн мăшăрĕ Агреппина (1868–1946 ç.ç.) пулнă. Вĕсен 14 ача – 7 ывăл тата 7 хĕр – çуралнă пулнă. Анчах та çиччĕшĕ кăна пурăннă – тăвата ывăлпа виçĕ хĕр. Шăпах вĕсем авалхи йăха Бардасов хушаматпа малалла тăснă та.

Паян вара Семен Кузьмич енĕпе кăна 70 кĕçĕн мăнук, вĕсен 100 ытла ачи. Семен Кузьмичăн вара татах та пиччĕш-шăллĕсем пулнă! Унăн ывăлĕ Семен Семенович колхоз йĕркеленĕ вăхăтран пуçласа унăн председателĕнче 16 çул вăй хунă. Шуркасси патĕнче Моргаушка юхан шыв çинче пĕрремĕш ГЭС туса лартнă. Çавăн чухнехи электричествăна паян та «Партас çути» тесе каласси манăçман.

Çемье уявĕнче эпир интереслине, çĕннине нумай пĕлтĕмĕр. Пирĕн хамăрăн тăвансемпе калаçмалли те, хамăр ачасемпе мăнуксене каласа памалли те туллиех. Уява килнĕ кашни çемье хăйĕн стена хаçатне хатĕрлесе килнĕччĕ...

Çемье – чи хакли. Çемьеллĕ çын хăйĕнпе юнашаррисен пурнăçне хăтлăрах, интереслĕрех, савăнăçлăрах тума тăрăшать. Çапла йăхран йăха пулса пырать: ашшĕ-амăшĕ ачисене воспитани парать, ватăлать те – вĕсемшĕн ачи-пăчи ответлă пулса тăрать. Аслисене хисеплес туйăм, çемьери йăла-йĕркесем, унăн историйĕ кашни çемьерех пурăнтăрччĕ.

**С. ТРОИЦКАЯ,**
**Шурча ялĕнчи библиотека ертӳçи.**

## Полици хроникинчен

# «Килĕр кунта! Касаççĕ!»

Çапла кăшкăрнă Çуткÿл ялĕнче пурăнакан арçын телефонпа полицин районти пайне шăнкăравласа. Паллах, полици сотрудникĕсем вырăна тухса кайнă. Лавкка умĕнчи ÿсĕр арçын шăпах çав пулнă та иккен. Никам та никама та касман – суя чĕнÿ пулнă.

Ятарлă службăсене суя чĕнÿпе шăнкăравланăшăн вара Раççей Федерацийĕн административлă прово нормисене пăснисен кодексĕпе явап тыттарассине çирĕплетсе хунă. 19.13 статьяпа килĕшÿллĕн пушар хуралне, полицие, васкавлă медицина пулăшăвне тата ятарлă ытти службăсене суя чĕнÿпе шăнкăравланăшăн 1000–1500 тенкĕ штраф пама право пур.

Ÿсĕр арçыннăн та саккунпа килĕшÿллĕн явап тытмалла пулать.

# Ют пурлăх ытла та илĕртÿллĕ

Катькасра пурăнакан пĕр арçын умне каçхи вун пĕр сехетре хута ярайман гараж «тухса тăрать». Маччине туса пĕтереймен çак çурт питĕ хытă илĕртнĕ мĕн арçынна. Малтан та судпа айăпланнăскер шала кĕрсе стройматериалсем вăрласа тухать: тăвата пластик чÿрече, ăшă тытакан, пăспа шыв яман материалсене. Вĕсене кунта тепĕр çын вăхăтлăх упрама ыйтнă пулнă. Халĕ тăкак кÿнĕ суммăна палăртассипе тата лару-тăрăва тĕпчесе уголовлă ĕç пуçарма хатĕрленеççĕ.

# Ÿсĕрскере ачасем тăратайман

Муркашри ача-пăча вылямалли площадкăра ÿсĕр арçын выртнине полици пайне пĕлтереççĕ. Ун тавра вара икĕ пĕчĕк ача ним тума пĕлмесĕр унталла-кунталла уткаланççĕ мĕн. Вĕсен выляс шухăшĕ те пĕтнĕ – çĕрте выртакан арçынна тăратмалла. Полици сотрудникĕсем арçынна тăратаççĕ. Вăл обществăлла вырăнта ÿсĕр пулнипе административлă йĕркене пăснине ăнлантарса протокол çыраççĕ.

Анчах та ачасене – унăн тăванĕн ывăлĕсене – Муркашри тĕп больницăри ача-пăча уйрăмĕнчи палатăна вырнаçтарма тивет.

# Пĕрле эрех ĕçнĕ те...

Хăйĕн «сожителĕ» патĕнче эрех ĕçсе хĕрарăм самаях ÿсĕрĕлнĕ пулас. Тăнне-пуçне çухатнă тейĕн. Эрех ĕçекенсем хушшинче хирĕçÿ тухнинчен тĕлĕнмелле мар та, анчах та хĕрарăм этем картинчен тухмалăхах ĕçнĕ. Кунта пулнă тепĕр арçынна, иккĕмĕш ушкăн инвалидне, аллинчен çĕçĕпе касса ярать. Арçынна Муркашри тĕп больницăн реанимаци уйрăмне леçмелле пулса тухать.

**Пичете Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

## Муркаш почтамчĕ пĕлтерет

# Эпир сире кĕтетпĕр

**Муркаш почтамчĕ, Федераллă почта çыхăнăвĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн ытти почтамчĕсем пекех, чукун çул тата авиабилетсем сутассине йĕркелерĕ. «Раççей почти» Федераллă патшалăх унитарлă предприятийĕн Чăваш Республикинчи Федераллă почта çыхăнăвĕн управленийĕн хушăвĕпе билетсем илнĕ чухне пассажирсенчен услугăсемшĕн çакăн чухлĕ илеççĕ:**

1.1. Электронлă авиабилет хатĕрлеме тата каялла тавăрса панине йĕркелеме услугăсен хакĕ 200 тенкĕ (кашни билетшăн тата НДС шутласан).

Электронлă авиабилетсене хăйсен ирĕкĕпе каялла тавăрса панă чухне пассажирсенчен авиабилет хатĕрлеме кайнă тăкаксене тытмаççĕ.

Хăйсенчен килмен сăлтавпа электронлă билетсене тавăрса памалла пулса тухнă чухне пассажирсене билет туянма кайнă тăкаксене пĕтĕмпех тавăрса параççĕ, каялла панăшăн укçа илмеççĕ.

1.2. 2 çула çитмен ачасем пур чухне вĕсемшĕн электронлă авиабилетсем хатĕрленĕ чухне, вĕсем валли уйрăм вырăнсем пăхса хуман пулсан, авиабилетсем хатĕрленĕшĕн укçа тытмаççĕ.

1.3. Электронлă чукун çул билетне каялла тавăрса панине йĕркелессин услуги 180 тенкĕпе (НДС шутласан, кашни вырăншăн тата мĕнле вакун пулнине пăхмасăр) танлашать.

Электронлă чукун çул билечĕсене каялла тавăрса панă чухне пассажирсене билет хатĕрлеме кайнă тăкаксен услугисемшĕн саплаштармаççĕ.

1.4. 5 çула çитмен ачасем тĕлĕшпе электронлă чукун çул билечĕсем хатĕрленĕ чухне, вĕсем валли уйрăм вырăнсем пăхса хуман пулсан, чукун çул билечĕсем хатĕрленĕшĕн укçа тытмаççĕ.

ПИЛОМАТЕРИАЛЫ:
ЛЮБОЙ РАЗМЕР 2-10.
ТЕЛ.: 8-903-346-40-58.

**Аттестат о среднем образовании А № 825872, выданный Калайкасинской средней школой 17 июня 1994 г. на имя Петровой Татьяны Николаевны, считать недействительным.**

## Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободных земельных участков

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:091101:58, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, земельный участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:091101, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5700 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:200102:144, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, земельный участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:200102 для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 1131287 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:150801:962, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 6810 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

КАНЦТОВАРЫ на рынке с. Моргауши
Товары для школы и офиса
Бланочная продукция, книги и журналы
Ксерокопия, ламинирование, тиражирование
CD, DVD диски: игры, мультики, музыка, фильмы, софт
Оптовые цены в розницу
Доставка до офиса бесплатная
Заказы принимаются по телефонам: 8(8352)38-00-22, 62-0-22 (местный)
Хиты продаж: ручка – 2 руб., тетрадь 12 л – 2,50 руб., бумага «Снегурочка» – 150 руб.

ВЫ ЗВОНИТЕ – МЫ ПРИВЕЗЕМ: цемент, блоки керамзитобетонные, профнастил, профили, трубы, уголки, утеплители, гипсокартон, поликарбонат, теплицы и многое другое. Адрес: д. Рыкакасы, т.ц. «Лотос». Тел.: 8-917-661-02-32. 4-10.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 11-20.

В Москву и Московскую обл. требуются
ФАСОВЩИЦЫ, ГРУЗЧИКИ
Питание, проживание — БЕСПЛАТНО.
Вахта. Выезд группами до предприятия.
Гарантии.
З/п 25 000 – 35 000 руб.
Тел.:8(8352)29-80-30, 29-50-30. 2-3.

ЮВЕЛИРНАЯ МАСТЕРСКАЯ:
– ремонт и изготовление ювелирных изделий из золота и серебра;
– скупка золота (цена за 1 г 850 руб.), старинных монет.
Адрес: в здании Дома быта.
Тел.: 8-927-668-85-01. 5-10.




## Прогноз погоды

| | суббота 21 июля | | | | воскресенье 22 июля | | | | понедельник 23 июля | | | | вторник 24 июля | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +14 | +17 | +17 | +15 | +14 | +19 | +21 | +17 | +14 | +20 | +18 | +14 | +13 | +18 | +20 | +17 |
| Давление мм | 738 | 739 | 741 | 743 | 744 | 747 | 748 | 749 | 750 | 750 | 750 | 749 | 749 | 750 | 749 | 748 |
| Влажность % | 92 | 74 | 72 | 86 | 90 | 73 | 59 | 89 | 95 | 75 | 86 | 100 | 97 | 74 | 49 | 78 |
| Ветер м/сек | 6 | 8 | 8 | 3 | 5 | 5 | 4 | 2 | 3 | 4 | 3 | 1 | 4 | 4 | 5 | 2 |
| | Ю-З | Ю-З | З | З | З | З | З | Ю | Ю-З | Ю-З | З | Ю-З | З | З | С-З | Ю-З |
| Солнце восход / заход | | 04:39 | 21:19 | | | 04:40 | 21:18 | | | 04:42 | 21:16 | | | 04:44 | 21:14 | |
| Луна восход / заход | | 07:33 | 21:34 | | | 08:52 | 21:51 | | | 10:12 | 22:08 | | | 11:33 | 22:27 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | | | | | |

Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 6-10.

Ĕне, вăкăр, пĕчĕк пăру, сурăх туянатăп.
Тел.: 8-905-343-60-63. 1-10.

ОКНА VEKA на века.
Металлические двери из Йошкар-Олы.
Гарантия 3 года.
Под ключ.
Тел.: 8-919-666-39-02, 8(83547)23-2-96. 3-5.

## Пĕлтерÿсем. Объявления

26 июля с 9-00 ч. Медицинский центр г. Чебоксары проводит медицинский осмотр состояния здоровья человека при помощи передовой компьютерной экспресс-диагностики в Вурманкасинском ФАПе, запись по тел: 66-7-38. 27 и 28 июля – в Моргаушском ФСК «Сывлăх», запись по тел.: 62-2-85. С вами работает высококвалифицированный врач Самакова Надежда Ивановна. Тел.: 8-906-385-28-09. Оплата 450 руб.
Лицензия Д 231533 Рег. № 74 от 06.06.2003 г. 8-906-385-83-77.

ГРАВМАССА, ЩЕБЕНЬ (доломитовый, гранитный, известковый), КЕРАМЗИТ, ПЕСОК (речной, карьерный), БЕТОН с доставкой до 30 т. за 1 рейс.
Тел.: 8-927-668-70-15, 38-70-15. 12-18.

* * *

Ĕне туянатăп. Тĕсĕ хура е хура-шурă пултăр.
Тел.: 8-905-199-92-77.

* * *

Требуется бухгалтер в магазин «Катюша», д. Ярославка, Моргаушский район. Условия: обработка первичных документов, неполный рабочий день, гибкий график работы. Требования: с/спец. образование, знание 1С. Зарплата при собеседовании. Тел.: 446-448. 3-3.

* * *

На автомойку «МОЙ МАСТЕР» требуются автомойщики. Требования: 20–40 лет, активные, ответственные, желательно проживающие в с. Моргауши.
Тел.: 8-927-847-45-08. 4-4.

* * *

Продаю песок речной, ОПГС с доставкой.
Тел.: 44-01-10. 9-10.

* * *

Стоматологический кабинет ООО «Вита Дент» предоставляет 5% скидку пациентам из районов (при предъявлении паспорта): на лечение зубов, частично съемный протез, полный съемный протез.
Телефон: 8(8352)41-72-90. Адрес: г. Чебоксары, ул. М. Павлова, 64, остановка «Дом ветеранов». 1-3.

* * *

Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Тел.: 8-905-347-99-15, 67-66-95. 2-5.

* * *

Сумалли ăратлă, сĕтлĕ качака икĕ уйăхри путеккисемпе сутатăп. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх.
Тел.: 63-4-35, 8-960-300-96-80.

* * *

Набор строителей и строительных бригад. Каменщики и разнорабочие в г. Москву.
Тел.: 8-906-383-14-65. Николай.

* * *

Продаю пресс-подборщик тюковый «СИПМА» польский, косилка польская новая, ворошилка польская новая. Тел.: 8-905-341-01-86. 1-2.

* * *

Пĕрре пăруланă хĕрлĕ тата хура хăмăр тĕслĕ ĕнесем сутатăп. Тел.: 8-906-386-72-78.

* * *

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.
Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 3-12.

* * *

Продаем породистых коз. Тел.: 8-906-131-00-50.

* * *

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок и замок на ручках окон. Шестикамерный профиль по цене трехкамерного. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а.
Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 1-12.

* * *

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:021001:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Волкова Валентина Романовна, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Тябакасы, ул. Полевая, д. 64.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:021001:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, общей площадью 1,34 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37, филиал ФГБУ «ФКП Росреестр».

* * *

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:140501:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Павлов Алексей Павлович, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Ижелькасы, ул. Восточная, д. 16. Павлова Елена Михайловна, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, д. Ижелькасы, ул. Восточная, д. 16.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:140501:2. Адрес местоположения образующихся земельных участков: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, территория землепользования СХПК им. Ленина, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:140501, каждый площадью по 1,33 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă служба Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 20.07.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4493.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.